20-мěш çул тухать. Хакě 20 пус.

1943
ИЮНЬ
11
ЭРНЕКУН
120(6357) №

Пěтěм тěнчери пролетарисем, пěрлешěр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĚН ХАÇАЧĚ

Совет Информаци Бюровěнчен

Июнěн 8-мěшěнчи каçхи пěлтерÿ

Июнěн 8-мěшěнче фронтра палла улшăнусемех пулман.

* * *

Июнěн 7-мěшěнче пирěн авиаци чаçěсем фронтăн тěрлě участокěсенче войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашинăран кая мар пěтерсе тăнă е сиенленě, чугунçул эшелонне çěмěрнě, горючи складне сирпěнтерсе янă, тăшман пехотине пěр ротăна çити сапаласа янă, вěсенчен пěр пайне пěтерсе тăнă.

* * *

Хěвеланăç фронтěнче пирěн чаçсем нимěç салтакěсемпе офицерěсене 250 çынна çити пěтерсе тăнă, 3 миномет, 7 пулемет тата грузсем турттарса пыракан 10 автомашинине çěмěрнě, тăшманăн темиçе артиллери батарейине пусарса лартнă. Пěр участокра пирěн подразделенисем пěр юханшыв сулахай хěрринче нимěçсем çирěплен лартнă позицисене атакăланă. Çав çапăçура тăшмана тысăк çухатусем кÿнě, ăна юханшывăн сылтăм хěррине ывăтса янă.

* * *

Севск районěнче пирěн чаçсем разведка тунă, артиллери тăшман çине персе тăнă. Пирěн артиллери 2 нимěç танкне çěмěрнě тата тăшманăн пехотине 3 ротăна çити пěтерсе тăнă. Пирěн подразделенисем нимěçсенчен 2 противотанковăй орудие, 4 пулемет, 60 автомат тата винтовкăсем тытса илнě. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Лисичанск районěнче пěр чаçри артиллеристсем тăшман пехоти пěр çěре пухăнса тăнă вырăна пеме пуçланă, боеприпассем турттарса пыракан темиçе автомашинăпа лава пěтерсе тăнă тата нимěç салтакěсемпе офицерěсене 100 çынна çити вěлерсе пěтернě. Пěр участокра нимěçсен отрячě лодкăсем çине ларса сурçěр Донец юханшывěн сулахай енне каçма хăтланнă. Пирěн боецсем çав лодкăсене пеме пуçланă та вěсем çинче ларса пыракан гитлеровецсене пěтерсе тăнă.

* * *

Ленинград фронтěнче пирěн подразделенисем нимěç салтакěсемпе офицерěсене 200 çынна çити пěтерсе тăнă. Артиллеристсемпе минометчиксем пехоте тăшманăн хирěç тăмалли вăйлă çирěплетнě узелне çěмěрнě. Унсăр пусне тата 18 дзотпа землянкăна ишěлтерсе антарнă, 3 орудие, 9 пулемет, 8 миномет пěтерсе тăнă тата боеприпассен складне сирпěнтерсе янă.

* * *

Волхов фронтěнче пěр участокра тăшман пехоти пирěн позицисене атакăлама хăтланнă. Пирěн подразделенисем, пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе, гитлеровецсен атакине сирсе янă. Тăшман хăйěн 150 ытла салтакěпе офицерě вилнě е аманнă хыççăн малтанхи позицисем çинех чакнă. Пирěн боецсем 5 станковăй пулемет тата винтовкăсемпе автоматсем, боеприпассем нумай тытса илнě. 3 нимěç офицерне тыткăна илнě.

* * *

Сурçěр-хěвеланăç фронтěнче пěр чаçăн подразделенийě çапăçса разведка тунă. Совет боецěсем тăшман тăнă вырăна вăркăнса кěрсе кайнă та штык вěççěн çапăçса 60 гитлеровеца пěтерсе тăнă. Тăшманăн темиçе дзотне блиндажне сирпěнтерсе янă.

* * *

Гомель облаçěнчи районсенчен пěринче кěрешекен партизансен «Железняк» ятлă отрячě тăшманăн 2 чугунçул эшелонне сирпěнтернě. Паровоз, войскăсем ларса пыракан 11 вагон тата зенитнăй орудисем тиенě 2 платформа ваннă. Белоруссири партизансен тепěр отрячě 2 эрне хушшинче тăшманăн бронепоездне тата 3 çар эшелонне ÿпěнтерсе янă. 2 паровоз, 15 вагон тата 2 бронеплощадка çěмěрěлнě.

* * *

Нимěç оккупанчěсем йышăнса илнě совет районěсенче пурăнакан халăх нимěçсен фашистла захватчикěсене пăхăнмасăр вěсене хирěç паттăррăн кěрешет. Нумай пулмасть, Украинăри Славута станцине нимěçсем Германие каторгăна вăйпа турттарса каякан совет гражданěсен эшелонě çитнě. Пěр вагонри хěрарăмсем хăйсене хуралласа пыракан 4 нимěçе пăвса вěлернě те хăйсем тарса çухалнă.

* * *

Югослави партизанěсем Герцеговинăра, Черногорире тата Санджакра нимěçсемпе итальянец оккупанчěсене хирěç хаяррăн çапăçаççě. Патриотсем тăшмана йывăр çухатусем кÿреççě. Загреб районěнче партизансем тăшман аэродромне тапăннă та 2 самолетпа 30 планера сунтарса янă, 5 пулемет, 100 винтовка ытла, 10.000 патрон тата 2 автомашина тытса илнě. Тăшманăн 120 салтакěпе офицерне тыткăна илнě. Хорватсен Загорьинче партизансем 60 гитлеровеца вěлернě е амантнă тата тыткăна илнисем пур. Партизансем 134 винтовка, 50.000 патрон тата ытти çар пурлăхě те тытса илнě. Тепěр районра патриотсем 2 нимěç эшелонне ÿпěнтерсе янă.

Июнěн 9-мěшěнчи каçхи пěлтерÿ

Июнěн 9-мěшěнче фронтра палла улшăнусемех пулман.

Баренц тинěсěнче пирěн авиаци нимěç транспортне путарнă, Балти тинěсěнче тăшманăн транспортне тата хуралта çÿрекен 3 катерне путарнă.

* * *

Июнěн 8-мěшěнче пирěн авиаци чаçěсем фронтăн тěрлě участокěсенче войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 40 автомашинăна çити пěтерсе тăнă е сиенленě, чугунçул эшелонне çěмěрнě, боеприпассен тата горючин темиçе складне сирпěнтерсе янă, артиллерин 2 батарейине пусарнă, тăшман пехотине пěр ротăна çити сапаласа янă, вěсенчен пěр пайне пěтерсе тăнă.

* * *

Хěвеланăç фронтěнче пирěн чаçсем тăшманăн 200 салтакěпе офицерне çити вěлернě, 3 орудие, 7 пулемет, 6 наблюдательнăй пункта пěтерсе тăнă тата боеприпассен складне сирпěнтерсе янă. Пěр чаçăн разведка тăвакан отрячě, противникăн тылне кěрсе кайса, оборона ěçěсене тăвакан нимěç салтакěсене тапăннă. Пирěн боецсем 30 гитлеровеца çити вěлернě, унтан, темиçе çынна тыткăна илсе, хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Лисичанск районěнче совет артиллерисчěсем 2 нимěç орудине пěтерсе тăнă, 5 блиндажпа пěр наблюдательнăй пункта ишěлтерсе антарнă тата гитлеровецсене пěр ротăна çити вěлерсе пěтернě. Пирěн летчиксем сывлăшри çапăçусенче 3 нимěç самолетне персе ÿкернě.

* * *

Дон çинчи Ростовран хěвеланăçнерехре пěр-пěрин çине хутран-ситрен персе тăнă. Минометчик-гвардеецсем тăшман позицийěсем çине персе, 7 дзотпа блиндажа ишěлтерсе антарнă тата 70 нимěç салтакěпе офицерне ытла пěтерсе тăнă. Разведчиксем: лейтенант Лях юлташ, красноармеецсем — Рычков, Невердовский, Симейкин, Чевычелов тата Манцуров юлташсем тăшманăн боевой охранине тапăннă та 20 гитлеровеца вěлернě.

* * *

Ленинград фронтěнче пирěн подразделенисем тăшман пехотине 2 ротăна çити пěтерсе тăнă. Артиллери 15 нимěç дзотěне 6 блиндажне ишěлтерсе антарнă, боеприпассен 2 складне сирпěнтерсе янă, 8 автомашина тата грузсем турттарса пыракан темиçе лава пěтерсе тăнă. Сержант Кривошков юлташ командăр пулса ертсе пыракан разведчиксен ушкăнě автоматсемпе тата ручной пулеметсемпе хěспăшалланнă белофиннсен ушкăнне асăрханă. Çак ушкăн сывăхах пырса çитсен, пирěн боецсем пеме пуçланă та тăшманăн 40 салтакне çити пěтерсе тăнă. Разведчиксем, 4 пулемет тата темиçе автомат тытса илсе, аванах хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Витебск облаçěнчи районсенчен пěринче кěрешекен белорусс партизанěсен отрячě темиçе кун хушшинче нимěçсен фронт линийě патне иккěмер паровозпа пыракан 3 çар эшелонне ÿпěнтерсе янă. 6 паровоз, боеприпассем тиенě 35 вагон, продовольстви тиенě 40 вагон тата тěрлěрен çар пурлăхě тиенě 10 вагон çěмěрěлнě. Халăх пурăнакан пěр пунктра совет патриочěсем тăшманăн пысăк складчěсене çунтарса янă.

* * *

Нимěçсен 51-мěш истребительнăй эскадрин штаб отрядěнчен июнěн 5-мěшěнче тыткăна илнě летчик унтер-офицер Франц Клюг çапла каласа панă: «Майăн 22-мěшěнче Курска тапăннă чух нимěç авиацийě поражени тÿсрě. Ытла та пысăк çухатусем пулнă пирки командовани хăшпěр офицерсене ответ тыттармалла пунă. Пěр авиаци майорне, унччен рыцарь хěресě парса наградӑланăскере, суда панă. Анчах та июнěн 2-мěшěнче Курска тепре тапăннă чухне çухатусем тата ытларах пулчěç. Пěр Орел группировки пайне вăл кун 56 машина çухатрě, унсăр пуçне тата ытти авиаци чаçěсем те пысăк çухатусем тÿсрěç».

* * *

Июнěн 2-мěшěнче тыткăна илнě стрелок ефрейтор Шорнштейн çапла каласа панă: «1943 çулхи майăн 22-мěшěнче эпě Францирен Сталино хулине, унта тăракан 55-мěш бомбардировочнăй эскадрăна çитрěм. Советсен Курск хулине эпě хутшăнса тунă пěррěмěш тапăнура пирěн экипаж катастрофа тÿсрě. Вырăссем пирěн машинăна персе ÿкерчěç. Летчика, мана тата радиста тыткăна илчěç».

* * *

Кăнтăр Эпин районěнче кěрешекен грек партизанěсем итальянецсен отрядне атакăланă та хаяр тытăçура 76 фашиста вěлернě. Тепěр районта Африкăпа Салоники чугунçулě çинче Греци патриочěсем завал тунă. Итальянецсен çар эшелонě çав завал тěлне çитсен, машинист поезда чарнă. Партизансем пулеметсемпе пеме пуçланă та тăшманăн салтакěсемпе офицерěсене чылай пěтернě.

Совет патриочěсем, эсир заем укçине срокчен тÿлесе çапăçу хирěнче çěнтерÿ тăвас куна çывхартатăр!

ССР Союзěн Наркомфинě пěлтерни

Çак çулхи июнěн 5-мěшěнче Государствăн 12 миллиард тенкěлěх кăларнă Иккěмěш Военнăй Заемне июнěн 9-мěшě пěтнě тěле 20 миллиард та 121 миллион тенкěлěх çыраннă, çакă вăл заема 8 миллиард та 121 миллион тенкěлěх иртерсе сарнине пěлтерет.

Заем илме çыранасси малалла пырать.

ССР Наркомфинě А. ЗВЕРЕВ.

Заем сарас ěç мěнле пырать

Государствăн Иккěмěш Военнăй Заемне сарас ěç пысăк çěкленÿпе малалла пулса пырать. Республикăра июнěн 11-мěшě тěлне 130.254,000 тенкěлěх сарнă, укçине 84.427.000 тенкě хывнă. Вăл шутран рабочисемпе служащисем хушшинче — 34.409.000 тенкěлěх, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче — 80.788.000 тенкěлěх сарнă. Çěнě заема сарас тěлěшпе Калинино, Красноармейски, Чкаловски, Шупашкар тата ытти районсем малта пыраççě. Калинино районěнче 5.552.000 тенкěлěх сарнă, укçине 5.12.000 тенкě пухнă, Чкаловски районра 4.386.000 тенкěлěх сарса, укçине 4.054.000 тенкě пухса панă.

Анчах республикăра заем укçине пухасси çителěксěр хăвăртлăхсемпе пулса пырать-ха. Уйрăмăнах ку тěлěшпе Йěпреç, Кушлавкка, Улатăр, Етěрне, Первомайски районсем юлса пыраççě. Асăннă районсем юлашки кунсенче заем укçине пухас енěпе нимěнле улшăну та туман. Çав районсенчи парти пе совет активě ěççыннисем хушшинчи массăллă-политикăллă ěçе кирлě пек йěркелемен.

Çěнě заема сарас ěç республикăра ăнăçлăн пуçланса, ăнăçлăн пулса пычě. Халě заем укçине пухассишěн çине тăрса кěрешмелле.

Çěнě заема тулли кăмăлпа çыранаççě

КАНАШ. Июнěн 10-мěшě. (Телефонпа). Государствăн Иккěмěш Военнăй Заемне районри ěççыннисем пурте пěр çын пек çыранса, хăйсем тăван çěршыва юратнине, хăйсем ирěклěхпе чыслăхшăн нимěн те шеллеменнине кăтартаççě. Июнěн 10-мěшě тěлне районěпе çěнě заема 3.642.000 тенкěлěх сарнă, укçине 3.432.000 тенкě хывнă. Вăл шутран рабочисемпе служащисем хушшинче 356.000 тенкěлěх, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 2.730.000 тенкěлěх, колхозсем хушшинче 456.000 тенкěлěх сарнă. Çěнě заема сарас тата укçине пухас ěç малалла ăнăçлăн пулса пырать.

Уйрăмăнах ку ěç «Хěрлě Хěм», «Хěрлě Çар», Доронин, Каганович тата Чкалов ячěсемпе тăракан колхозсенче хěрÿллěн пулса иртрě.

Каганович ячěпе тăракан колхозра 154.960 тенкěлěх çыранса, укçине пěтěмпех хыврěç. Колхоз председателě Я. Иванов юлташ çак пархатарлă ěçре хăй пример кăтартрě. вăл 20 пин тенкěлěх çыранса, укçине те çийěнчех пачě. Аччари «Хěрлě Çар» колхозри 73 çулхи старик Я. Федоров юлташ 3 пин тенкěлěх çыранчě, укçине те çавăнтах пачě. Унăн икě ывăлě фронтра ирсěр тăшмана хирěç çапăçаççě. Вăл, çěнě заем кăларнине пěтěм чун-хавалăхěпе ырласа, çапла каларě:

— Сталин юлташăн пирěн урамра та праздник пулě тенě сăмахě манăн пуçăмран тухма пěлмест. Эпě вăл кун инçе юлманнине пěлсе тăратăп. Юратнă çěршывăмăра пулăшасси пирěн пурин те тивěçлě те хисеплě ěç пулса тăрать, — терě.

Доронин ячěпе тăракан колхоз Иккěмěш Военнăй Заема 160.000 тенкěлěх сарнă, укçине те пěтěмпех пухнă. Колхоз председателě И. Кузьмин юлташ 10 пин тенкěлěх çыраннă, укçине çав вăхăтрах панă. Бригадирсемпе правлени членěсем пурте 5-шер пин тенкěлěх çыраннă, укçине те çав кунах хывнă.

Анчах районра хăшпěр колхозсенче çěнě заема çыраннă укçана пухасси сÿрěккěн пырать-ха. Тěслěхрен, «Хěрлě Çăлтăр» (председателě Ерницев), «Искра» (председателě Владимиров) колхозсем паянхи куна заем çыраннă укçана çурри ытларах çеç пухнă-ха.

Кашни предприятипе колхозра заема сарнипе пěрлех укçине те çийěнчех пухма тăрăшмалла.

А. ДОБРОДУШЕВ,
ВКП(б) райкомěн секретарě.

Пулас рабочисем заема çыранаççě

Ěç пěтнě хыççăн ФЗО шкулěнче митинг пулса иртрě. Митингра директорăн политика енěпе ěçлекен помощникě П. Иванова юлташ сăмах илет.

— Паян эпир Правительство Государствăн Иккěмěш Военнăй Заемне кăларасси çинчен йышăннă постановленине итлерěмěр. Эпир пěлетпěр, паттăр Хěрлě Çара ирсěр тăшманпа çапăçма ытларах та ытларах самолетсем, танксем, тупăсем т. ыт. хěçпăшалсем кирлě. Заема çыраннă пирěн укçа çавсене тума каять те ěнтě. Эпě çěнě заема ěç укçин 150 процентě чухлě çыранатăп, — терě вăл.

Иванова юлташ хыççăн пěрин хыççăн тепри çěнě заема çыранма пуçларěç. Шкулта ěçлекен Синин, Баиров юлташсем икě уйăхри ěç укçи чухлě çыранчěç. Вěренекенсем, пěр çын пек пулса, хăйсен патриотла шухăш-кăмăлне кăтартса, ěç укçин 150—200 процентě чухлě çыранаççě. Кривцова, Степанова, Михайлов вěренекенсем 250-шар тенкě çыранса, укçине те çавăнтах пачěç. Ытти вěренекенсем те вěсенчен кая çыранмарěç, укçисене те çак кунсенчех парса татма пулчěç.

Коммунистла Интернационалăн Исполнительнăй Комитечěн Президиумě ПĚЛТЕРНИ

1943 çулхи июнěн 8-мěшěнче пулса иртнě хăйěн юлашки ларăвěнче Коммунистла Интернационалăн Исполнительнăй Комитечěн Президиумě, Коммунистла Интернационала салатса ярасси çинчен 1943 çулхи майăн 15-мěшěнче йышăннă постановлени пирки Интернационалăн секцийěсем йышăннă решенисене пăхса тухса, çакна палăртрě:

1. Коммунистла Интернационала салатса яма сěнние çак коммунистла партисем ырланă:

Австралири коммунистсен партийě,
Австрири коммунистсен партийě,
Аргентинăри коммунистсен партийě,
Бельгири коммунистсен партийě,
Болгарири коммунистсен партийě,
Великобританири коммунистсен партийě,
Венгрири коммунистсен партийě,
Германири коммунистсен партийě,
Ирландири коммунистсен партийě,
Испанири коммунистсен партийě,
Италири коммунистсен партийě,
Канадăри коммунистсен партийě,
Каталонири социалистсен пěрлешнě партийě,
Китайри коммунистсен партийě,
Колумбири коммунистсен партийě,
Кубăри революцилле-коммунистла союз,
Мексикăри коммунистсен партийě,
Польшăри рабочи парти,
Румынири коммунистсен партийě,
Сирири коммунистсен партийě,
СССР-ти Пěтěм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийě,
Уругвайри коммунистсен партийě,
Финляндири коммунистсен партийě,
Францири коммунистсен партийě,
Чехословакири коммунистсен партийě,
Чилири коммунистсен партийě,
Швейцарири коммунистсен партийě,
Швецири коммунистсен партийě,
Югославири коммунистсен партийě,
Кăнтăр Африка Союзěнчи коммунистсен партийě,
Çамрăксен Коммунистла Интернационалě (вăл Коммунистла Интернационала унăн секцийě пулса кěрет).

2. Коммунистла Интернационалăн пěр секцийě те Исполнительнăй Комитет Президиумěн сěнěвне хирěç каламан.

Çавăнпа та Коммунистла Интернационалăн Комитечěн Президиумě:

1. Коммунистла Интернационала салатса яма сěннине Коммунистла Интернационалăн халь ěçлекен тата хăйсен решенийěсем çинчен пěлтерме пултарнă секцийěсем (çав шутра чи пысăк секцисем пурте) пěрсаслăн ырланă тесе пěлтерет.

2. 1943 çулхи июнěн 10-мěшěнчен вара Коммунистла Интернационалăн Исполнительнăй Комитетне, Исполнительнăй Комитетăн Президиумěпе Секретариатне, çавăн пекех тата Пěтěм тěнчери Контрольнăй Комиссие салатса янă тесе шутлать.

3. Димитров (комисси председателě), Мануильский, Пик тата Эрколи кěрекен комиссине Коммунистла Интернационалăн ěçěсене, органěсене, аппаратне тата пурлăхне пěтерсе хума хушать.

Коммунистла Интернационалăн Исполнительнăй Комитечěн Президиумě хушнипе:

Г. ДИМИТРОВ.

1943 çулхи июнěн 9-мěшě
(«Правда» июнěн 10-мěшě

Районсемпе МТС-сен 1943 çулхи çуракинчи социализмлă ăмăртăвěн итогěсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомěпе ВКП(б) Чăваш Обкомěн бюровě йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

Районсемпе МТС-сен 1943 çулхи çуракинчи социализмлă ăмăртăвěн итогěсене пăхса тухса, Чăваш АССР Совнаркомěпе ВКП(б) Обкомěн бюровě çапла йышăннă:

1. 1943 çулхи çуракине ирттерес тěлěшпе районсем хушшинче пынă социализмлă ăмăртура çěнтернě тесе Вăрнар районне йышăнас (ВКП(б) райкомěн секретарě Коротков юлташ, райисполком председателě Ниткин юлташ). Район çураки планне кěске срокра тата лайăх пахалăхпа 110,1 процент чухлě пурнăçланă. Вăрнар районне Чăваш АССР Совнаркомěпе ВКП(б) Обкомěн куçса çÿрекен Хěрлě Ялавне парас. Вăрнар райисполкомěн председательне Ниткин юлташа, ВКП(б) райкомěн секретарьне Коротков юлташа тата райçěрěç пайěн заведующине Максимов юлташа кашнинех пěр уйăхри ěçукçи чухлě премии парас. Ялхуçалăхěнче малта пыракансене премилеме Вăрнар райисполкомěн аллине 8 пин тенкě укçа парас.

Çуракине ирттерес тěлěшпе Элěк, Шупашкар, Елчěк тата Сěнтěр районěсем лайăх ěçленине палăртас.

2. Çуракинче МТС-сем хушшинче пынă социализмлă ăмăртура çěнтернě тесе Елчěк МТС-не йышăнас (директорě Яшин юлташ, старши механик Павлов юлташ). МТС çуркунне тракторсемпе ěçлемелли плана 164,5 процент чухлě пурнăçланă, кашни 15 лаша вăйлă трактора 131 гектар сухаланă тата 7 тонна горючи перекетлесе кăларнă. Чăваш АССР Совнаркомěпе ВКП(б) Обкомěн куçса çÿрекен Хěрлě Ялавне Елчěк МТС-ěн аллинчех хăварас. МТС директорне Яшин юлташа тата старши механика Павлов юлташа кашнинех пěр уйăхри ěçукçи чухлě премии парас. МТС-ри малта пыракан трактористсемпе рабочисене тата служащисене премилеме Елчěк МТС директорěн аллине 4 пин тенкě укçа парас.

Çуракинче Йěпреç, Шăтасан, Комсомольски, Вăрнар, Элěк, Тăвай, Куславкка МТС-ěсем лайăх ěçленине палăртас.

Чăваш АССР Совнаркомěн председателě А. МАТВЕЕВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомěн Секретарě И. ЧАРЫКОВ.

Тырă вырма тухас умěнхи ěçсене ăнăçлăн пуркăçлар

ИШЛЕЙ. Район çураки ěçěсене ăнăçлăн туса ирттерчě. Çапла, иртнě çулти пекех, кăçал та пирěн колхозсем ялхуçалăхěнчи малтанхи тěп задачăна аван пурнăçларěç. Вăйлă тыр-пулăн никěсне ăнăçлăн хыврěç. Умра халě пысăк ěçсем тăраççě. Тырпулсене вырса пухас ěç пуçланиччен колхозлă ялăн ирхи çěртмене пысăк пахалăхпа туса хăвармалла, вырьăх-чěрлěх валли алат-çимěç хатěрлемелли кампание организованно ирттермелле, тырăсене çумкуракěсенчен тасатмалла.

Колхоз правленийěсем çак вăхăтра ěçе уйрăмах йěркеллěн ертсе пыма кирлě. Кашни колхозникне колхозниăн, куллен ěçре пулса, тухăçлăн ěçлемелле. Пур ěçе те вăхăтра, ăнăçлăн туса пыма тăрăшмалла. Пирěн районри чылай колхозсенче ирхи çěртме тăвас ěç кая юлса пырать. Ирхи çěртмене июнь уйăхěнче пур колхозсенче те вěçлемелле. Каярах юлни агротехникăна пăсни пулать. Тислěк кăларас ěçе хăвăртрах вěçлемелле. Ăна, пěр тăхтаса тăмасăр, çийěнчех сухаласа хăвармалла. Малта пыракан колхозсенче çакна шута илсе ěçлеççě, анчах пур колхозсенче те мар. Нарядсенчен пуш лашасем пурте ирхи çěртме тăвас, уя тислěк кăларас ěçре пулмалла.

Пěтěм ěç вăйěпе тулли усă курса колхозсен утă çулма тухма хатěр пулмалла. Кăçал пирěн алнă курăксене çеç 1.800 гектар çинчен çулса илмелле. Улăх утине вăхăтра, лайăх пуçтарса илес пулать, çырма-çатрари вăрмансенчи курăксене пухса, тырă вырма тухиччен силос хатěрлемелли плана тултармалла.

Район 1942-мěш ялхуçалăх çулěнче япăх мар ěçлерě. Социализмлă ăмăртăва алла сарса, кăçал тата тухăçларах ěçлемелле. Колхоз правленийěсен, участоксенчи агрономсен, ěçре çавраннăçулăх кăтартса, халăха куллен тухăçлăн ěçлеме мобилизацилемелле.

К. ФЕДОРОВ,
Райçěрěç пайěн главнăй агрономě.

Кăтартусем парассине кěтсе тăмалла мар

СĚНТĚР, июнěн 9-мěшě. Тырăсене çумкуракěсенчен тасатас ěç районра халě те анлăн пулса пымасть-ха. Хăшпěр колхозсенче çеç çак ěçе пысăк вырăна хурса туса пыраççě. Кăпас ялсоветěнчи «КИМ» колхоз, акă, çум çумлас ěçе лайăх йěркеленě. 98 гектар çинчи кěрхи тырăсене тата 37 гектар çинчи çурхи тырăсене пěтěм калăпěшěпех çумкуракěсенчен тасатса тухнă. Юнга ялсоветěнчи «1905 год» колхоз 112 гектар çинчен, Пушкăрт ялсоветěнчи «Заря» колхоз 72 гектар çинчен çумкуракěсене йăлтах тасатнă.

Анчах чылай колхозсенче тěрлěрен сăлтавсене пула çум çумлас ěçе халě те пуçăнман. Шашкар ялсоветěнчи «Аврора» (председателě Перцев юлташ), «Крестьянская газета» (председателě Кожанов юлташ), «Красный маяк» (председателě Толстов юлташ) колхозсен уйхирěсене çумкуракěсем талккишěпех пусса илнě. Анчах çумкуракěсене пěтерес тěлěшпе кунта халě нимěн те туман-ха. Ялсовет исполкомě те ку тěлěшпе нимěнле мерăсем те йышăнмасть. Çум çумлас ěçе çавăн пекех Шатракасси ялсоветěнчи «Идея» колхозра тата Хачăк ялсоветěнчи колхозсенче пачах тытăнман. Вěсен руководителěсем ку тěлěшпе районран уйрăм кăтартусем парассине кěтсе лараççě.

Тырăсене çумкуракěсенчен тасатнипе пěрлех çак ěçе пахча-çимěçсем лартнă участоксенче те тимлěн туса пымалла. Пахча-çимěçсене çумкуракěсенчен вăхăтра тасатмалла. Çимěçсене тěрлěрен сиенлě, хурт-кăпшанкăсенчен те вăхăтра сыхламалла.

Ку тěлěшпе районри колхозсен Сěнтěр ялсоветěнчи «Новый быт» колхоз ěçěнчен пример илмелле. «Новый быт» колхозăн пахча-çимěç ÿстерекен бригади çимěçсене тухăçлăн та лайăх ÿстерессишěн тимлěн тăрăшать. Агроном сěнěвěсене кунта тěплěн пурнăçлаççě. Бригада кăçал 6 гектар çине тěрлěрен çимěçсем лартнă. Шăтса тухнă хыççăнах вěсене çумкуракěсенчен тасатнă. Бригадир Котельников юлташ ертсе пынипе, купăста калчисене тěрлěрен сиенлě хурт-кăпшанкăсем сиенлессерен вěсене махорка тусанě сапаççě тата çул çинчи тусана нафталинпа хутшăнтарса, ушпа та усă кураççě.

А. СОЛОВЬЕВ.

Çулйěрсене юсамалли уйăхлăх

Çулйěрсем юсавлă пулмалла

ИШЛЕЙ. Васликасси ялсоветне кěрекен территоринче çуркунне хăшпěр тěлте çулсем пăсăлса юлнă. Тěслěхрен, Сархурăн ялě патěнчен лашасăр та иртсе çÿреме май çук. Апла пулин те ялсовет çак çула юсас енěпе нимěн те тумасть. Ялсовет председателě А. Соловьев юлташ çак ыйтăва татпратсан: — Халě вăрçă, урăх ěçсем те нумай, тет.

Çулйěр вăрçă вăхăтěнче мěнле вырăн йышăнса тăнине Соловьев юлташăн ăнланса илмелле. Ялсовет территоринче кăтартнулла çулйěр тăвассишěн тăрăшмалла.

М. ЯХВАРОВ.

Çулйěр ěçне кая хăвармалла мар

КАЛИНИНО. Районри колхозсем çулйěр уйăхěнче ěçěн графикне пурнăçлассишěн тăрăшса ěçлеççě. Усларри «Броневик», Ермошкăри Калинин ячěпе тăракан, «Чăваш Коммуни», «Сутталла» колхозсем çак ěçре уйрăмăнах аван ěçлеççě.

«Броневик» колхозран пынă В. Мясников юлташăн бригади куллен графика ытлашшипех тултарса пырать. Çавăн пекех Калинин ячěпе тăракан колхоз та çулйěр ěçне активлăн хутшăнчě. Я. Иванов юлташ бригадинчи колхозниксем задание 150—200 процент тултарса ěçлеççě.

Лайăх ěçлесе пыракан колхозсемпе пěрлех районра çак ěçе çителěклě таран хутшăнманнисем те пур-ха. Тěслěхрен, Хурăн Кăкшăмри «Красноармеец» колхоз паянхи куна çулйěр ěçне сирлě чухлě çын та, лаша та яман. Çавна пула колхоз задание те тултарса пыраймасть.

В. ЗАЙЦЕВ.

ВЦСПС-па пěр Халăх Комиссариатěнче

ВЦСПС тата пěр Халăх Комиссариачě, Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи май уйăхěнчи итогěсене пăхса тухса, главнăй инженер Якушин пулса тăракан завода Оборонăн Государственнăй Комитечěн куçса çÿрекен Хěрлě Ялавне тата пěрремěш премине пама йышăннă.

А. МАТВЕЕВ
Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ

Вăрçă вăхăтĕнчи вăйлă тырпула лайăх пăхса çитĕнтерсе вăхăтра пухса кертер

Сталин юлташ маййăн 1-мĕшĕнчи хăйĕн приказĕнче мĕнпур совет халăхĕн ĕç программине палăртса пачĕ. Çулшуçăн приказĕ пирĕн колхозниксене çĕнĕ паха ĕçсем тума хавхалантарчĕ. Республикăри колхозсемпе МТС-сенче тата совхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсене лайăхрах туса ирттерессишĕн, вăрçă вăхăтĕнчи вăйлă тырпула йĕркеллĕн пуса илессишĕн пыракан социализмлă ăмăрту çĕнĕ вăйпа сарăлса кайрĕ. Ăмăртăвăн малтанхи результачĕсем куç умĕнчех.

Çураки итогĕсем

Государствăн çураки планне пирĕн республика маййăн 29-мĕшĕ тĕлне — пĕлтĕрхинчен 12 кун маларах пурнăçа кĕртрĕ. Планран ирттерсе оборона фончĕ валли тата ирĕке кăларнă районсене пулăшма 6.000 ытла гектар акса хăварнă. 17 МТС июнĕн 1-мĕшĕччен çураки планне пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртнĕ, пĕлтĕр çав вăхăт тĕлне хăйсен çураки планĕсене 6 МТС кăна пурнăçа кĕртнĕ пулнă. Çуракине уйрăмах Вăрнар, Элĕк, Елчĕк, Шупашкар, Калинино, Сĕнтĕр, Советски тата Етĕрне районĕсем организованно туса ирттерчĕç. Елчĕк, Шăхасан, Йĕпрес, Вăрнар, Комсомольски, Элĕк тата ытти МТС-сенчи тракторпистсем пысăк ĕç пухăçлăхĕн тĕслĕхĕсене кăтартрĕç.

Çуракине ăнăçлăн туса ирттерсе, колхозсемпе совхозсем вăрçă вăхăтĕнчи вăйлă тырпулăн çирĕп никĕсне хывса хăварчĕç. Халĕ ĕнтĕ пĕтĕм ĕç тырпулсене пăхса çитĕнтерессине тата вĕсене пухса кĕртессине организацилеме пĕлнинчен килет. Çураки вăхăтĕнчи ĕç хастарлăхне малашнехи ялхуçалăх ĕçĕсенче икĕ хут, виçĕ хут ÿстермелле.

Çĕртме тăвасси тата çĕртме сухи туна çĕр лаптăкĕсене пăхса тăрасси

Республикăри нумай колхозсем иртнĕ çул çĕртме тăвас ĕçе июлĕн 15-мĕшне çитиччен, уйрăм вырăнсенче вара — августăн 1-мĕшĕччен тăсрĕç. Лаппа сухаланă чухне кăна мар, тракторсемпе сухаланă чухне те ăшăх сухаланисем пулчĕç. Тислĕксене кая юлса тăкрĕç. Çĕртме тумалли çĕрсем çине акнă культурăсене кая юлса пухса кĕртнĕ пирки çав çĕр лаптăкĕсене кĕрхи ака пуçланиччченех сухаламасăр тăчĕç, вĕсене пур çĕрте те тенĕ пекех удобрени хывса çемçетмерĕç, тăпрана типĕтсе ячĕç. Çав çĕр лаптăкĕсем çинче вара калчасем вăйсăр пулчĕç. Юлашкинчен, чылай колхозсенче кĕрхи калчасене пăхас ĕçе начар йĕркелерĕç, çĕртме тунă çĕрсене çумкурăкĕ пусса илчĕ, уйрăм çĕр лаптăкĕсене лаппа сухалама та май çук пулса тăчĕ.

Çав йăнăшсене пула республикăри нумай колхозсен, уйрăмăнах Чкаловски, Куславкка, Хĕрлĕ Чутай, Пăрачкав тата Улатăр районĕсенчи колхозсен пиитех те пысăк сиен тÿсмелле пулчĕ. Кĕрхи тырăсем сайра шăтса тухрĕç, хĕле начар кĕнĕ калча юр айĕнчен чылай пĕтсе тухрĕ, çавна пула нумай çĕр лаптăкне çуркунне çĕнĕрен акмалла пулчĕ. Нумай вăрлăх, вăхăт тата ĕç ахалех сая карĕ.

Çав йăнăшсенчен пирĕн кăçал çирĕп урок тумалла, кăçалхи çул вĕсем çĕнĕрен пулма тивĕçлĕ мар. Анчах çапах та хăшпĕр вырăнта çав йăнăшсене шута илмерĕç, вĕсене кăçал çĕнĕрен тата пысăкраххăн та тăвассĕ. Тĕрĕссипе пирĕн паянхи кун тĕлне çĕртме туса пĕтермеллеччĕ, анчах июнĕн 5-мĕшĕ тĕлне çĕртме тумалли плана республикăри колхозсем 11,6 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ. Çĕртме тăвас ĕç уйрăмăнах Улатăр, Ишлей, Октябрьски, Первомайски, Пăрачкав, Вăрмар, Тăвай районĕсенче начар пырать.

Çавăн пек вăрахăн ĕçлессине пĕтермелле. Çĕртме тăвас ĕçе июнĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕçлессишĕн кирлĕ мерăсене пурне те йышăнмалла. Çак ĕçе мĕнпур туртăм вăйне — мĕнпур тракторсемпе лашасене куçармалла. Пур пек тислĕке пĕтĕмпех хире, чи малтан, кĕрхи тулă акма палăртнă участоксем çине кăлармалла.

Çĕртме сухин паха лăхĕ çинчен пĕр минутлăха та манмалла мар. Тракторсемпе 18—20 сантиметртан ăшăх мар, лашасемпе 16—18 сантиметртан ăшăх мар сухаламалла, сухаланипе пĕр вăхăтрах сÿрелесе пымалла. Таса çĕртме тунă çĕр лаптăкĕсене лайăх пăхса тăмалла — культиваци тумалла е икĕ хутран кая мар сÿрелемелле. Тăпра вăхăтлă нÿрлĕ пулсан, çĕртмене икĕ хут сухалассине августăн пĕрремĕшĕнчен кая юлмасăр, вĕçлемелле, çавăнпа пĕрлех акас умĕн тăпрана тепĕр хут çавăрттарса пăрахса сухалама кирлĕ мар. Çанталăк типĕ пулсан çĕртмене иккĕмĕш хут сухалани кирлĕ мар, акас умĕн культиваци тунипе тата сÿрелленипе çырлахмалла.

Урăх культурăсем йышăнă участоксем çинче вăхăтра çĕртме тăвас шутпа клеверпа викăна ирттерех пухса кĕртмелле, унтан çийĕнчех сухаласа пăрахмалла, çанталăк типĕ тăрать пулсан, çав курăксене пухса кĕртнĕ хыççăн 5 сантиметр тарăнăш лущени туса ирттермелле. Çав ĕçсене тăвассине ĕнтĕ июлĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕçлемелле.

Тырпулсене пăхасси

Çанталăк кирек мĕнле пулсан та, пирĕн умра вăйлă тырпул туса илес задача тăрать. Кăçалхи çул çанталăк, уйрăмăнах июнь уйăхĕнче, ялхуçалăх культурисем хĕрсе ÿсмелли уйăхра, лайăхах мар пулма пултарать. Çавăнпа та ĕнтĕ тырпулсене пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе тумалли мĕнпур ĕçсене типĕ çанталăк пулассине шута илсе туса пымалла, тăпрара мĕнле те пулин ытларах нÿрлĕх сыхласа хăварассишĕн тăрăшмалла.

Калчасене пăхасси кашни колхоз обязательнăй йĕркепе туса ирттерме тивĕçлĕ чылай мероприятисенчен тăрать.

Чи малтан, çумкурăкĕсемпе тата ялхуçалăх культурисене сиенлекен хурт-кăпшанкăсемпе татăклă кĕрешÿ пуçласа ямалла. Пĕлтĕр хăшпĕр колхозсем çум çумлас ĕçе кая хăварчĕç. Çавна пула хăшпĕр вырăнсенчи калчасене пĕтĕмпех çум пусса илчĕ, çав участоксене вара выльăхсем валли апатлăх кăна çулса пăрахма лекрĕ. Çавăн пек пулнă, тĕслĕхрен, Куславкка районĕнчи «Первая пятилетка» колхозра, унта çурхи тулă акнă 80 гектара çум пуснă пирки выльăх апачĕ валли çулнă.

Кăçалхи çул нумай колхозсенче çĕрсе тарăн мар сухаланă, чылай çĕр лаптăкне алăпа акса хăварнă тата çурхине яхăн çуркунне сухаланă çĕр çине акнă. Çаксем пурте ĕнтĕ çумкурăкĕсемпе сиенлĕ хурт-кăпшанкăсене ĕрчеме лайăх майсем парассĕ. Акă халь тăрсана пĕтерекен хурт-кăпшанкă тата тăпра тăрси массăллăн тухни çинчен сигналсем килессĕ.

Çавăнпа та ĕнтĕ калчасене куллен сăнаса тăрассине йĕркелемелле, çумкурăкĕсене тухнă пеккипех çумлас ĕçе организацилемелле, тырпулсене пухса кĕртмелле пуличченех таса тытмалла. Вăрлăхлăх акнă участоксем çине уйрăмăнах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

Колхозсене ялхуçалăх культурисене сăтăрлакан хурт-кăпшанкăсем пысăк сиен кÿме пултарассĕ. Çав хурт-кăпшанкăсемпе кĕрешме пирĕн ядсемпе химикатсем çителĕксĕр, çавăнпа та вĕсене перекетлĕн тыткаламалла, сиенлĕ хурт-кăпшанкăсемпе кĕрешес ĕçре кал-калрах майсемпе усă курмалла. Ядохимикатсене улăштарма пултаракан вырăнти наркăмăшлă курăксемпе, тысячилистникпе, йÿçĕ утмăлтурапа, çăва курăкĕпе, вĕсенчен наркăмăшлă настойкăсем туса, анлăн усă курмалла.

Тырпулсене пăхас ĕçре ретсем хушшине кăпкалатасси тата калчасене çĕрĕк тăприпе тислĕкпе, торфпа е çумкурăкĕсен вăрри çук таса ... па мульчировани тăвасси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак мероприятисем тăпрана типесрен сыхлас ĕçре лайăх майсем пулса тăрассĕ. Çĕрулмипе пахча-çимĕç культурисене уйрăмах тимлĕн пăхмалла, вĕсем тухăçлă пулассси çĕр çумкăрăкĕсенчен таса пулнинчен тата тăпра нÿрлĕ те кăпăка пулнинчен килет. Çăмăр çителĕклĕ çуса тăрсан, çĕрулмине малтан çумласа икĕ хутран кая мар купаламалла. Çанталăк типĕ пулсан çĕрулмине купалани сиен кăна кÿме пултарать, çавăнпа та кун пек чухне ретсем хушшине кăпкалатнипех çырлахмалла. Ретсем хушшине кăпкалатас ĕçе çăмăллатма тата хăвăртлатма кашни колхозра «Планет» йышши полольниксем пулмалла, çук пулсан вĕсене тумалла. Кок-сагызăн, сахăр кăшманĕн, йĕтĕнĕн, махоркăн кантăрăн, эмель курăкĕсен пахча-çимĕçсен тата вăрлăхлăх акнă культурăсен калчисене çавăн пекех тимлĕн пăхса тăмалла. Çав ĕçсене кашни культурăн уйрăмлăхĕсене тата çанталăк мĕнлине шута илсе туса пымалла.

Тырпулсене пăхассине организацилес ĕçре агрономсем уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрассĕ. Агротехникăлла мероприятисене пурнăçа кĕртсе пынă çĕрте агрономсен колхозсене куллен канаш парса тăмалла, çитменлĕхсемпе йăнăшсене вăхăтра палăртса вĕсене пĕтерме ĕçлĕн пулăшмалла.

Утă çулассине тата силос хывасси

Çине тăрса тĕплĕн хатĕрленме кирлĕ такан пысăк ĕç — утă çулас ĕç çывхарса килет. Хăшпĕр колхозсен руководителĕсем иртнĕ çул утă çулма кирлĕ пек хатĕрленмерĕç, çавна пула вĕсем нумай çухатрĕç. Утта кая юлса çулчĕç, çавăнпа та начар утă пухса илчĕç. Ĕç вăйĕн чылайрахăш пайĕ утă çулнă çĕрте ĕçленĕ пирки тырă вырас ĕçре йывăрлăхсем пулчĕç.

Мĕнпур колхозсемпе совхозсен тата МТС-сен утă çулма тĕплĕн хатĕрленсе çитмелле — утă çулмалли машинăсене юсамалла, çавасене туптамалла, сенăксемпе кĕреплесене, урапасене халех хатĕрлесе çитермелле; утă çулмалли машинăсемпе ĕçлеме кадрсем хатĕрлемелле, çавна май як-виçĕ кунлăх семинарсем туса ирттермелле. Чăвашсоюзпа Чăвашпромсоюза çаза хăйрамалли хăйрасемпе лапаткасем туса хатĕрлесе районсене çителĕклĕ таран кÿрсе пама хушнă.

Тĕплĕн хатĕрленнĕ утă çулас ĕçе пур колхозсенче те вăхăтра туса ирттерме май парать. Нумай çул ÿсекен курăксене (клеверсене) вĕсем чечеке ларма пуçласан çулмалла; кĕрхи тырăсене акмалли участоксенче — июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне, ытти участоксенче вара — июлĕн 5-мĕшĕ тĕлне çулса пĕтермелле; утă уййăхне июлĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр, утăлăх акнă викăна — июлĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр çулса пĕтермелле. Курăк акнă участоксенче кĕрхи тырă акма çĕртмене июлĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр сухаласа хăвармалла.

Утă çулма çĕрте машинăсемпе анлăрах усă курас тата алăпа çулма лайăхрах майсем туса парас шутпа утă çулмалли участоксене малтанах тĕплĕн пăхса тухмалла, çапăсемпе тĕрлĕ çÿп-çапсене тасатмалла, тĕмескесене пĕтермелле, шултăра туналлă хыт-хурасене тăпăлтарса пăрахмалла тата ытти те.

Пирĕн умра улăхсемпе кĕтÿ кĕтмелли вырăнсене лайăхлатас пысăк задача тăрать. Улăхсене çĕнĕ курăк вăррисем акса лайăхлатма тăрăшмалла, çакă вăл утă тухăçлăхне икĕ хутран кая мар ÿстерме пулăшма пултарать.

Выльăх апат-çимĕçĕн запасĕсене ÿстерес ĕçре силос мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен сахал мар калаçнă. Анчах силос хывмалли плана час-часах пурнăçа кĕмесĕр юлать. Силос хывма курăк çук тесçĕ. Çав вăхăтрах кай тĕллĕн ÿсекен курăксемпе çумкурăкĕсем темĕн чухлĕ ахаль пĕтессĕ. Кăçал çавна шута илсе, силос хывас ĕçе ирттерех тытăнмалла. Тырă вырма пуçличчен силос хывмалли плана 70 процентран кая мар пурнăçа кĕртес тесе, çак ĕçе тĕплĕн организацилемелле, силос хывмă çĕрте çумкурăкĕсемпе анлăн усă курмалла.

Çавăн пекех колхозсенче выльăх апат-çимĕçĕн ресурсĕсене уйхăрте çумкурăксем пухса, улăхсемпе вăрмансенче çулса типĕтсе тата симĕс йывăç çулçине касса типĕтсе, кĕркунне тăкăнакан йывăç çулçисене пухса чылай ÿстерме пулать.

Тырпулсене пухса кĕртме кăтартуллăн хатĕрленер

Вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешÿвĕн юлашки татăклă тапхăрĕ тырпулсене вырса, çапса пуçтарасси пулать. Ку тапхăрта пĕр вăхăтрах ялхуçалăхĕнчи пысăк ĕçсем — тырă вырасси, авăн çапасси, государствăна тырă парасси, кĕрхи тырăсене акасси, кĕрхи çĕртме тăвасси тата ытти те килсе тухаççĕ. Пĕр ĕç тепĕр ĕç айне пулса юлмалла ан пултăр, пĕри тепĕрне ан чăрмантартăр, пурте хăйсен вăхăтĕнче пулса пычăр, черетлĕх пулмалла мар. Çавăн пек тикĕс ĕçлемелле тăвас тесен, малтанах пур енчен те шухăшласа тĕплĕ план туса хумалла, ĕç вăйĕпе туртăм вăйне тĕрĕс вырнаçтармалла, ĕçе лайăх организацилемелле.

Кувакино, Пăрачкав, Первомайски, Елчĕк тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозсем пĕлтĕрхи çул тырă вырас ĕçре тÿсме çук кая юлчĕç, кĕлтесене вăхăтра капана хывайманрĕç тата авăна вăхăтра çапса пуçтараймарĕç, çавна пула нумай çухатусем турĕç. Çакă вăл чи малтан колхозсемпе МТС руководителĕсем çавăрăнăçусăр пулнинчен, вĕсем уборкăна кирлĕ пек хатĕрленменнинчен килчĕ.

Тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртес тесен, чи малтан, материалсемпе техникăллă базăна вăхăтра тата тĕплĕн хатĕрлесе çитермелле. МТС-семпе колхозсенчи машинăсен паркне хатĕрлесе тумалла. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă решени тăрăх пирĕн республикăн комбайнсене июлĕн 15-мĕшĕ тĕлне юсаса çитермелле. Анчах паянхи кун тĕлне комбайнсем юсамалли плана пĕтĕмпе те 15 процент кăна пурнăçланă. Елчĕк, Шăхасан тата ытти малта пыракан МТС-сем, хăйсен тракторĕсене срокчен чылай малтан юсаса лартнăскерсем те, механизаторла кадрсене комбайнсене юсас ĕçе кусарман. Чылай çĕрте комбайнсемпе молотилкăсене паянхи кунччен те МТС-сен картишĕсене илсе пыман. Хăшпĕр комбайнсем кирлĕ-кирлĕ мар çĕрте саланса выртаççĕ. Государствăн машинисем çине çавăн пек киревсĕр пăхнине пĕтермелле. Комбайнсемпе тырă вырмалли ытти машинăсене юсас ĕçе халех анлăн пуçласа ямалла, республика Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ тунă графика çирĕп тытса пымалла, пахалăхшăн тăрăшмалла. Çак ĕçре машинăсен запаслă кивĕ пайĕсене юсаса çĕнетесси тата çĕнĕрен тăвасси пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Уборка пуçланиччен виçĕ эрне малтан комбайнерсемпе вĕсен помощникĕсене МТС-семпе совхозсем валли кирлĕ таран хатĕрлесе çитермелле.

Комбайнсене лайăх ĕçлеме май парас тесен, МТС-семпе совхозсен директорĕсен комбайнсемпе ĕçлемелли участоксене малтанах уйăрса памалла, çав участоксемпе комбайнерсене паллаштармалла, машинăсем ĕçлемелли вырăнсене çапăсемпе çÿп-çапсенчен тасатмалла, комбайнсем ĕçлемелли маршрутсене туса хатĕрлемелле, комбайнсем патĕнче ĕçлеме колхозниксене уйăрса çирĕплетмелле. Комбайнсем айĕнчен тырă турттарма кашни комбайн пуçне 50 михĕрен кая мар хатĕрлесе хумалла.

Тырпулсен 90 процентне яхăн пирĕн машинăсемпе тата алăпа вырмалла пулать. Анчах машинăсене тата алăпа ĕçлемелли инвентаре юсас ĕçе Наркомземпа районсенчи организацисем, колхоз руководителĕсем хакламасăр тăраççĕ. Çак ĕçе вăраха янине тÿсме çук. Тырă вырмалли мĕнпур машинăсене — жнейкăсене, косилкăсене, лобогрейкăсене, молотилкăсене июнĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр пĕтĕмпех хатĕрлесе лартмалла. Çакăнпа пĕрлех çавасемпе çурласене те хатĕрлемелле. Транспорт хуçалăхне — урапасемпе тырă турттармалли ещĕксене, кĕлте урапасене тата кÿлмелли хатĕрсене хатĕрлесси ниепле те кая хăварма çук задача пулса тăрать. Уборка вăхăтĕнче кÿлмелли хатĕр çук тесе пĕр лаша та ĕçсĕр ан тăтăр.

Витнĕ итемсемпе сушилкăсем туса хатĕрлес ĕç çине уйрăмăнах тимлĕн çаврăнса пăхмалла. 1941 çулта витнĕ итемсемпе сушилкăсем çук пирки тырпула çапса пуçтарас ĕçе мĕн тери кая хăварнине çирĕп асра тытмалла. Итемсене пурне те пĕлтĕрхи улăмсенчен тасатмалла. Тырă хумалли складсене йĕркене кĕртмелле, вĕсен çийĕсене витмелле, ăшчиксене дезинфекци тумалла.

Уборкăра ĕçе организацилесси, мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене план тăрăх палăртса хурасси тата ĕç вăйне вырнаçтарса тухасси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Кашни МТС-па колхозра тата совхозра тырă вырса, çапса пуçтарас ĕçе хатĕрленсе ирттермелли плана тĕплĕн шухăшласа тумалла. Пур тĕрлĕ ĕçсене те тĕрĕс пĕтĕçтерсе пыма, тырă вырмалли машинăсемпе туллин тата ăнăçлăн усă курма, çавăн пекех лаша вăйĕпе трактор вăйĕсене те тĕрĕс сыхăнтарса пыма çирĕп йĕрке тумалла.

Тырпула сыхласси — пысăк ыйту. Колхоз руководителĕсем час-часах çак ĕç çине сиелтен пăхаççĕ. Çавна пула тырпул нумай пĕтет. Хăшпĕр колхозсенче тырпула вăрлакансемпе кĕрешмеççĕ. Тырпула хирте те, итем çинче те, кĕлетсенче те, кăнтăрла та, çĕрле те сыхлассине çирĕп йĕркене кĕртмелле. Вырнă тата çапнă тырпула тĕплĕн шута илсе пымалла, тырпула хуралланă çĕрте коммунистсемпе комсомолецсенчен тата колхоз активĕнчен контроль посчĕсем организацилес пулать. Вĕсем колхоз хуралçисене тĕрĕслесе, ĕçре пулăшса тăма тивĕçлĕ.

Ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси

Тĕштырăпа çĕрулми, пахча-çимĕçсемпе ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем йышăнмалли хатĕрлемме вăхăт ĕнтĕ. Хатĕрлев организацийĕсен июлĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр мĕнпур тырă склачĕсене юсаса дезинфекци тумалла, лабораторисемпе виçе хуçалăхне йĕркене кĕртмелле, тырă йышăнас ĕçре ĕçлеме çынсем уйăрса, вĕсене вĕрентмелле. Хатĕрлев пункчĕсене тырă турттарма колхозсен малтанах ятарласа çынсем уйăрмалла, вĕсем çумне лашасем çирĕплетмелле, тырă тултармалли михĕсемпе ещĕксем çителĕклĕ таран туpса памалла, ĕçшĕн вара вĕсене миçе хут кайса килнинчен мар, мĕн чухлĕ тырă турттарнинчен шутласа тÿлемелле. Колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх авансла тырă государство умĕнчи обязательствăсене тултарса пынă май кăна памалла çирĕп йĕрке тăвас пулать.

Колхозсемпе совхозсем тата МТС-сем умĕнче питех те пысăк задачăсем тăраççĕ. Çĕртме тăвасси, тырпулсене пăхса çитĕнтересси, утă çулассси, тырпулсене пухса кĕртесси, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси, — çаксене пурне те вăхăтра туса ирттерни колхозсемпе МТС-сен тата совхозсен пурнăçĕнче кăна мар, пĕтĕм çĕршыв пурнăçĕнче те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак ĕçсене пурнăçа кĕртес тесен, колхозниксем хушшинчи, МТС-семпе совхозсенчи работниксем хушшинчи дисциплинăна çирĕплетессишĕн çине тăрса кĕрешмелле. Партипе комсомол организацийĕсен колхоз пурнăçĕпе куллен интересленмелле, колхозниксем хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе анлăн сарса ямалла. Ку тĕлĕшпе çуракинче тунă пуян опыт пур. Çак опыта пĕтĕçтерсе, унпала туллин усă курмалла.

Пирĕн республика çуракине ăнăçлăн ирттерсе малта пыракан облаçсемпе республикăсен ретне тăчĕ. Ялхуçалăх çулĕн малтанхи тапхăрĕнче пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе çĕнтерсе илнĕ çав хисеплĕ вырăна пирĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн малашнехи пур тапхăрĕсенче те сыхласа хăвармалла.

Фронта пулăшассишĕн, тăшмана çĕнтерессишĕн пирĕн татах та ытларах вăй хурса, ывăнма пĕлмесĕр, вăхăта шутласа тăмасăр ĕçлемелле, вăйлă тырпул туса ăна вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртмелле, государство умĕнчи хамăрăн обязательствăсене пурнăçа кĕртмелле. Çакă ĕнтĕ Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне республика аллинче сыхласа хăварма, Хĕрлĕ Çар тата Сталин юлташ тав тунине тивĕçлĕ пулма çирĕп шанчăк парать.

Пирĕн авиаци тăшман аэродромĕсене пырса çапни

Июнĕн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиацин пысăк вăйĕсем тăшман аэродромĕсене пырса çапнă. Тăшман аэродромĕсем çине бомбăсем пăрахса, нимĕçсен нумай самолетне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Аэродромсен районĕнче горючи ... чĕсемпе боеприпассен склачĕсем çине те бомбăсем ăнăçлăн пăрахнă. Пирĕн летчиксем çĕр çинче нумай тĕлте пушарсем тухнине тата взрывсем пулнине курнă. Брянск хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри аэродромсем çинче уйрăмах вăйлă взрывсем пулнă.

Пирĕн самолетсем, пĕринсĕр пуçне, пурте хăйсен базисене таврăннă.

Пирен авиаци тăшман аэродромĕсене çĕнĕрен пырса çапни

Июнĕн 9-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиацин пысăк соединенийĕсем тăшманăн 6 аэродромне çĕнĕрен питĕ вăйлăн пырса çапнă. Тăшман аэродромĕсене тапăннипе сахалтан та 150—160 нимĕç самолетне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассемпе горючи темиçе пысăк складне сирпĕнтерсе янă, аэродромсем çинчи нумай хуралтсене, вăл шутра темиçе ангара, çунтарса янă. Боевой заданирен пирĕн 21 самолет каялла таврăнман.

Нимĕç самолечĕсем Горький хулине тапăнма хăтланни

Июнĕн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле нимĕç самолечĕсен ушкăнĕ Горький хулине тапăнма хăтланнă. Хула патне çитесспе пирĕн истребительнăй авиацийĕпе зенитнăй артиллери тăшман самолечĕсене саппаласа янă. Хула районне икĕ нимĕç самолечĕ вĕçсе кĕнĕ. Вĕсем пурăнакан çуртсем çине темиçе бомба пăрахнă. Пĕр вырăнта пушар тухнă. Ăна часах сÿнтернĕ. Тапăнăва сирсе янă чухне 7 нимĕç бомбардировщикне персе ÿкернĕ. Пирĕн авиацин çухатусем пулман.

Нимĕç самолечĕсем Волхов хулине тапăнни

Июнĕн 8-мĕшĕнче кăнтăрла нимĕç авиацийĕ 3 ушкăнпа, мĕнпурĕ 70 самолет таран, Волхов хулине тапăнма хăтланнă. Хула çине темиçе самолет вĕçсе кĕнĕ, вĕсем нимĕн тĕллли-пăллисĕр бомбăсем пăрахнă. Çав бомбăсем халăх пурăнакан 4 çурта сиенленĕ. Промышленность объекчĕсемпе ытти объектсем сиен курман.

Тапăнăва сирсе янă чух сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери пеннипе 24 нимĕç самолетне персе ÿкернĕ. Пирĕн 2 самолет пĕтнĕ.

Ют çĕршывсенче

ФРАНЦУЗ НАЦИНЕ ИРĔКЕ КĂЛАРАС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН КОМИТЕТĂН СОСТАВĔ

ЛОНДОН, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, француз нацине ирĕке кăларакан комитета çаксем кĕнĕ: Ренэ Массильи — ютçĕршыв ĕçĕсен комиссарĕ, Катру генерал — мусульмансен ĕçĕсен комиссарĕ, Жан Монне — хĕçпăшал, снабжени тата реконструкци комиссарĕ, Ренэ Плевен — колонисен комиссарĕ, Ренэ Мейер — çулйĕрсен тата суту-илÿ флочĕн комиссарĕ, Анри Боннэ (нацисен лигин деятелĕ пулнăскер) — информаци комиссарĕ, Андрэ Филип — шалти ĕçсен комиссарĕ.

Комитет составне çавăн пекех тата ытти çынсем те чылай кĕнĕ.

ФРАНЦИ ХАЛĂХĔ ГИТЛЕРЛА ОККУПАНТСЕНЕ ХИРĔÇ ТАВĂРАТЬ

ЛОНДОН, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра тухса тăракан „Франс“ ятлă хаçат çапла пĕлтерет: çак çулăн малтанхи 4 уйăхĕ хушшине илсен те, Франци патриочĕсен уйрăм ушкăнĕсемпе партизансен отрячĕсем 32 предприятие çунтарса е сирпĕнтерсе янă. Па-де-Кале департаментĕнче диверси туса 3 электростанцие самаях сиенленĕ, 28 трансформаторнăй подстанцие çĕмĕрсе тăкнă. Çав департаментрах пысăк напряжениллĕ 27 линие сиенленĕ тата шахтăсенчи установкăсене чылайĕшне çĕмĕрсе юрăхсăра кăларнă. 193 нимĕç грузовикне пĕтерсе тăкнă, нимĕçсем валли груз турттарса пыракан 17 баржăна шыва путарнă. Атлантика çыранĕсенчи портсенчен пĕринче 2 пысăк грузовой суднăна сирпĕнтерсе янă. Çавăн пекех тата выльăх апачĕн 27 складне тата горючи хунă темиçе вуншар склада çунтарса янă.

ЮГОСЛАВИ ПАРТИЗАНĔСЕМ ОККУПАНТСЕМПЕ ХАЯРРĂН ÇАПĂÇАÇÇĔ

СТАМБУЛ, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Недичевра тухса тăракан «Ново време» ятлă хаçатра çак кунсенче çапла çырнă: Герцеговинăпа Черногорире хаяр çапăçусем пыраççĕ. «Юлашки эрнесем хушшинче, — тесе çырать хаçат, — партизансем Санджака тата Дринăран, Пивăран, Тарăран тата Лимăран кăнтăралларахра выртакан территорие хăйсен аллинче çирĕп тытса тăраççĕ». Хаçат çырнă тăрăх, партизансене хирĕç пыракан операцисенче нимĕçсен яланхи войскисем, «СС» чаçĕсем, Павелич дивизийĕсем тата итальянецсемпе болгарсен дивизийĕсем те хутшăнса вăрçаççĕ. Оккупантсемпе вĕсен тусĕсем çав операцисенче пысăк çухатусем тÿсеççĕ. Герцеговинăри юлашки çапăçусенче уйрăмăнах Павеличăн «добровольчески полкне» тата нимĕç эсэсовецĕсен дивизине хытă çĕмĕрнĕ.

СОЮЗНИКСЕН САМОЛЕЧĔСЕМ ПАНТЕЛЛЕРИ УТРАВНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри войскисен штабĕ çапла пĕлтерет: Çурçĕр-хĕвеланăç Африкăри сывлăш-çар вăйĕсен самолечĕсем Пантеллери утравне тапăнас ĕçе каллех пуçласа янă. Июнĕн 7-мĕшĕнче кунĕпе йывăр тата вăтам бомбардировщиксем Пантеллери утравне темиçе хутчен те атакăланă.

КĔСКЕН

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен флотĕнче халĕхи вăхăтра 1 миллион та 400 пин матрос, 130 пин офицер тăрать. США-н тинĕс пехоти халĕхи вăхăтра 250 пинрен пуçласа 300 пин çынна çитиччен шутланать, çыранри оборона чаçĕсенче 150 пин çын.

ПĔРЛЕШÿЛЛĔ НАЦИСЕН ВĂРÇĂ ХЫÇÇĂНХИ ПРОДОВОЛЬСТВИ ЫЙТĂВĔСЕМ ТĔЛĔШПЕ ПУЛСА ИРТНĔ КОНФЕРЕНЦИН ДЕЛЕГАЦИНЕ ЙЫШĂННĂ ЧУХ РУЗВЕЛЬТ КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, июнĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт Шурă Çуртра пĕрлешÿллĕ нацисен вăрçă хыççăнхи продовольстви ыйтăвĕсем тĕлĕшпе нумай пулмасть пулса иртнĕ конференцин делегацине хапăл туса йышăннă. Делегацие саламласа, Рузвельт çапла каланă:

«Сирĕн конференци — пысăк ĕç, мĕншĕн тесен вăл пĕрлешÿллĕ нацисен пĕрремĕш конференцийĕ пулса тăрать. Пĕрремĕш конференци пулин те, унăн çитĕнĕвĕсем эпир кĕтнинчен ÿсĕмлĕрех пулчĕç. Сложнăй тата йывăр ыйтусем тĕлĕшпе пурте пĕр шухăшлă пулса, эсир пĕрлешÿллĕ нацисем вăрçă тĕлĕшпе кăна мар, тата вăрçă хыççăнхи нумай ытти йывăр ыйтусем тĕлĕшпе те пĕрлĕхлĕ иккенне кăтартрăр», тенĕ.

Фронтри юмор

ЛАЙĂХ ТЕНИ МĔН ТЕНИ

НИМĔÇ ГЕНЕРАЛĔ: Ĕç-пуçсем мĕнле пирĕн участокра?

НИМĔÇ ОФИЦЕРĔ: Пур вăйранах тăрăшатпăр, господин генерал: паян тата 250 çын пытартăмăр. Халĕ ыран валли шăтăксем чавса хатĕрлеççĕ.

ПАРИЖРЕ

— Кара-ул!.. Вĕлерĕ-е-е!..

— Мĕн пулчĕ? Ку мĕнле йĕркесĕрлĕх?

— Каçарăр, мсье: йĕркесĕрлĕх мар, ку вăл — «çĕнĕ йĕрке».

(«Сталинский гвардеец»).

КАМА МĔН

Икĕ финн салтакĕ, ĕлĕк туслă пурăннăскерсем, тĕл пулаççĕ.

— Ĕçÿсем мĕнле, Сяркя?

— Калама та çук, Мявря, мăй таранах ĕç.

— Çапăçатăн-и?

— Çук! Вилнĕ салтаксене пуçтаратăп. Эсĕ тата мĕн ĕçлетĕн?

— Нимĕн те ĕçлеместĕп.

— Мĕншĕн?

— Ара, мана трофейăсем пуçтарма хушнă та...

(«Во славу Родины»).

НИМĔÇСЕН ОКОПĔНЧИ КАЛАÇУ

— Эсĕ мĕн аллусене тăраткаласа ларатăн?

— Наступлениене кайма хатĕрленетĕп.

(«Защитник отечества»).

ГЕРМАНИРИ ЯЛАНХИ МОДА

— Кăçалхи çуркунне Берлинра мĕнле мода?

— Хĕллехиех: хĕлле пирĕнне хĕллехи тумтирсене туртса илетчĕç, çуркунне çуркуннехисене çаратаççĕ.

(«Бей врага»).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

1943 çулхи май уйăхĕн 6-мĕш кунĕнче Ишлей районĕнчи Шетмĕпуç ялсоветне кĕрекен «Звезда» колхозăн кÿлмен тиха çухалнă. Паллисем çаксем: 2 çул та 2 уйăхра, тĕсĕ çутă хăла, хÿрипе çилхи хура, çамки çинче шурă паллă пур.

Пĕлекенсен колхоз правленине çÿлте кăтартнă адреспа пĕлтермелле 2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1355 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР Заказ № ...